Канашри „Авангард“ ертел сумĕнчи парторганизацийĕн коммунĕсем отчотне суйлăнĕ пухăвĕнче парти пухăвĕсем вăхăтра пулманнине, парти организацийĕпе комсомол организацине сителĕкеçр йĕртсе лынине тата парти ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе калама çук начар ĕçленине палăртрĕç. Малашне парторганизаци ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе пухура нумай кăтартусем парса хăварчĕç.

Унтанна чылай вăхăт иртрĕ пулин те парти организацийĕ отчотна суйлав пухăвĕнче кăтартса хăварнă ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе начар ĕçлет.

ПСК(б) Парти Тĕнхомĕ парти ретне çĕнĕрен илме пуçласси пирки кăларнă решени хыççăн пĕр сыннă та парти ретне илмен.

В. П. Мошков.
Ф. И. Малышкин.

### Колхозри пуçламăш парторганизацинче

Пирĕн Кĕлĕмкассинчи (Йĕпреç районĕ) парторганизаци районри пуçламăш парторганизацисенчен чи пысăкки. Организацинче парти членĕсем 6, кандидат 1, сочуствуйушчиеем 2 çын.

Отчотпа суйлав пухăвĕ решенисене епĕр мĕнле пурнăçласа пыратпăр-ха? Чи малтанах парти вĕренĕвне лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Пур коммуниссем те парти историне вĕренмели кружока çыреççĕ. Сочуствуйушчисем вăлăн йăтарласа политграмăта кружокĕ организацилене, унта ытти сывăхрах йăлсенчен те сочувствуйушчисем çыреççĕ. Парти вĕренĕвĕ кружокĕсен занятисене вăхăтра туса пыратпăр.

Йăлти халăх хушшинче агитаци ĕçне РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлана вăхăтра вăйлатса йăтамăр. Урăмсене участкăсем çине валеççĕ, унта агитатăрсене çирĕплетнĕçĕ, вĕсем тăрăшса ĕçлерĕç. Уйăрăмăнах Иванов П. И., Васильĕв И., Йемелйанăв А. агитатăрсене палăртма пулат, ку йăулташсем агитаци ĕçĕнче лайăх ĕçленине палла пулчĕç.

Агитатăрсем 23 сын, вĕсемпе парторг йăланах уйăхра икĕ семинар туса иртерет. Халь ку агитатăрсене колхоз бригадирĕсем сумне çирĕплетнĕ, вĕсем производствă ĕçĕпе те çав бригадăсенчех ĕçлеççĕ. Перле ĕçлекен колхозниксем агитатăра лайăх итлеççĕ. Колхозниксем тырă вырнă, кайнă вăхăтра агитатăрсем хаçат вуласа параççĕ.

Кăçал икĕ кандидата Шемăкинпа Макçимăв йăлташсене партине членне илтмĕр. Агитаци ĕçĕнче хĕрӳле ĕçлекен Васильĕв Иль йăпа Йемелйанăв колхозниксене сочуствуйушчисен ретне илтмĕр. Партине çĕнĕрен илес тĕлĕшпе сителĕклех ĕçлеймеспĕр-ха. Малала колхозниксем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатса-йăрса, уборкă вăхăтенче ĕçе малта пыракан стахановецсене партине кĕмĕ хатĕрленне пулăшатпăр.

Колхозниксене политикăна тата йăлхуçалăх мĕтĕвĕсене вĕренне колхоз активĕн заочнăй курсĕ пулăшăр, вăл заочнăй курсра колхозник-активиссем 23 çын вĕренчĕç, вĕсенчен 19-çын испытани тытса курсран вĕренсе тухрĕç.

Партинлĕ-политикăлă ĕçе колхозри ĕçе лайăхлатассине тачă çыхăнтаратпăр. Колхоз председателĕнче коммунис Микушов йăлташ ĕçлет. Вăл колхоза малти рете кăларассишĕн тăрăшать, вăлах парторг заместителĕ. Иртнĕ çулта пирĕн колхоз тĕштирĕсен тухăçне устересссишĕн вырăн кĕрешĕрĕ, ку кĕрешӳре коммунисем малта пычĕç. Çавăнпа та колхоз ыраш пуçлăн тухăçлăхне хăпартса Пĕтĕм Сойузри йăлхуçăлăх выставкинне кандидата тăма тивĕçле пулчĕ.

Çуракине колхоз кĕске çрукра иртерчĕ, тĕштирасăр пуçне техникăлă культурăсем те акнă, самахран, макорăк 20 гектар, йĕтĕн 5 гектар.

Çак техникăлă культурăсене лайăх туса илес тĕлĕшпе Шемăкин коммунис тăрăшса ĕçлет.

Пирĕн колхоз тырă вырма йăвулĕн 17-мĕшĕнче тухрĕ. Кăçал пирĕн уйран 537 гектар тĕрле тырпулă пуçтарса кĕртмале, вăл шутран ыраш 242 гектар, кĕркă тулă 46 гектар. Çак тырпула тăкаксăр пуçтарса кĕртес ĕçе пĕтĕм колхозниксене кĕрешĕне йăвăртаратпăр, вĕсене ĕçре пулăшатпăр.

Халь колхозра стахановецсем 45 çын, вĕсем шутне тырпула пухса кĕнĕ чухне пирĕн тата йышăнатмала.

Отчотпа суйлав пухăвĕ комсомол организацине пулăшас пирки халлянне сителĕксĕр пурнăçласа пыратпăр-ха. Комсомол комитечĕ секретарĕ Петров сулла ĕçе йăхтарчĕ, ăна кирлĕ пулăшу парнăç марăмăр. Комсомолĕцсенчен парторганизацине ĕçлеме илнĕ сĕнĕрен илнĕ ĕçлеймеллĕ, ку тăванчен епĕр çак ĕç сине сителĕклĕ сăнарăнса пăхмăн.

Кĕлĕмкассинчи пуçламăш организацин парторгĕ

Н. Прокопйев.

### Активлăх ӳсет

Канаш—Шупашкар хушшинчи чукунçу строительствине ĕçлекен комсомолĕцсем хушшинче лекцисем комсомол 20 çул тутăнчен хатĕрленесси вăйланасах пырат. 3-мĕш участкăри бригадăн стахановецĕ П. Пушков йăхтаплăка 150 процент тултарса пыхсăмах пачĕ. Макçимăв йăлташ бригадинăн комсомолĕц-стахановецсем кашнийех кашнийех вырттса ĕçлеççĕ. Вĕсем культурăн нормăна 150 процент тултарса пымала тăма сиккĕн кĕрешеççĕ.

Комсомолĕц-стахановец Тарас йăлташ пуçарăнăвне тĕрĕлтен кр жоксем ĕçлеме пуçларĕç.

## Комсомол Чăваш Обкомĕнче

Çак кунсенче ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ Куславкка тата Йĕлчĕк районĕнчи комсомолĕцсемпе сӳйăрăм тăман çамрăксем хушшинче политикăлă вĕренĕве халăх вăхăтра мĕлле организацилленине тĕрĕслесе тухрĕ.

Вăл тĕрĕлăн çакна кăтартрĕ: ПСÇЛКС Куславкка райком секретарĕ Миговарăв, Йĕлчĕк райком секретарĕ Воробйов йăлташсем ПСÇЛКС Тĕнкомĕн V мĕш пленум решенине тата комсомол Чăваш Обкомĕн III-мĕш пленум решенине пурнăçламаççĕ.

Куславккăна Йĕлчĕк районĕсенче халĕ, çуллахи вăхăтра, комсомол политвĕренĕвĕ пачах сӳнсе дараçи патне ситнĕ. Куславкка районĕнче тĕрĕсленĕ 24 пуçламăш организацирен иккĕшĕнче кăна политкружокçем ĕçлеççĕ, Йĕлчĕк районĕнче тĕрĕсленĕ 0 пуçламăш организацирен пĕринче кăна пĕр кружок ĕçлет.

ПСÇЛКС Тĕнкомĕ пропагандиссене йĕртсе пырăсси тата пропагандисçем семинарĕсем çинчен 1938 ç. апрелĕн 26-мĕшĕнче йышăнă постановлĕнине пурнăçламаççĕ.

Куславкка районĕнче те, Йĕлчĕк районĕнче те комсомол пропагандисçем семинарĕсем вăхăтра вăхăта аран-аран пуçлăлаçа пыраççĕ. Ку семинарсене йăчĕшĕн кăна иртерĕç пирки, вĕсем пĕр те семинарсем пек иртиеççĕ. Семинарсенче пите нумай мĕтусем лартаççăр кампа вăхăтрах чылай колхозсенче ĕç йăпăх пырат. „Политотделец“, „Канаш“ тата „КИМ“ колхозсене жнейкăсем ĕçсĕр ларасçĕ. „1905 год“ колхозра кĕлтесене çыхмасăр выртараççĕ. „Красный бригадир“ колхозра ыраш вырма 2 кун кайа йăлса тухна пирки тăкаксем нумай пулаççĕ.

Машинă-трактăрлă станцире пуçлĕ 11 комбайн. Комбайнсене йăвулĕн 17-мĕшĕнчех участкăсене йăнă, анчах вĕсенчен пĕри те пайан кунченех ĕçе тытăнман. Йăнтăшри комбайн сăнчăр кĕске тесе ĕçлемесĕр тăнă. „Молния“ колхоз председателĕ комбайна ĕçлеме чарса тăрат. „Эгна“ колхозра колхоз председателĕпе бригадирсем уçăнах комбайнпа ĕçлессине хирĕç тăнă. Комбайн патĕнче хурăлçă Ростовцев пĕр пичке автол йăхтарса йăма тăнă.

Тата çакна та палăртмала: комбайнсене ĕçлеттерме пĕчĕк ĕçхатĕрсем ситменни те чарса тăрат, чылай сĕрте гайкă уçсисем ситмеççĕ. Воронкасем çук пирки горючисене йăнă чух 10 процент таран йăхса пĕтет.

В. Васильĕв.

ÜКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „В. И. Ленин 1917 çулта РСДРП çартри организацисен канашлăвĕнче тухса калани“. Б. Е. Владимирский художник картинĕ.

В. Иванов репродукцийĕ (Сойузфото).

# Литературá страници

## Ене шыракансем

(Хевеланăç чиккинчен киленĕ калав)

Лăпкă кăç. Ниçта имĕн сас чĕвĕ илтĕнмест. Сĕм вăрман тĕксĕмленнĕçемĕн тĕксĕмленет. Хутран-ситрен çăмăл пуçлă тăмана ухлетесе çухăрни илтĕнет. Çумăмра хăмăн чи сывăх йăлташсем: Иванов, Крымзов. Сулахай ĕнче „Гинбер" ăтлă пысăк ăнтă чăлт-чăлт пăхса, хăлхисене чăнк тăратса лараť. Пайанки кăç епĕр çав тери ответлă вырăнта.

Тайăнса ларатăп ватă хурăн çумне. Куçăмсем шăтарас пек пăхаççĕ. Сасартăк манăн „Гинбер" тапăртатса илчĕ. Вăрман тăрăх, пысăк варсем урлă-темле кайăк сассисĕн ăнăраса-таврана сланчĕ. Ăна хирĕç каллех çинçе саслăн унăн кĕввинех выльăрĕ. Ай-хитре кайăксем, тетĕп. Çав вăхăтрах пуçăмра: çирĕн сыхланас, тăшмана тытас, тесе шухăшсем выльăрĕç. Сас-чĕвĕ памасăр хуттерех, курăк айне чăматăп. Пуç кăна кăшт çеç симĕс курăк ăшĕнчен курăнса выртать. Çырмари шыв сутăлса шанкăртатать. Сасартăк çырма тĕпĕнче тĕмĕскер шăпăр-шăпăр тунă пек туйăнчĕ. Пăшала кус патнерех тытса выртатăп. Шухăшăм: мĕнле те пулин чĕрĕллех тытасчĕ. Чĕрĕлле илсе çитересчĕ заставăна.

Каллех-кайăк йăрла пуçларĕ. Ăна хирĕç каллех тепĕр кайăкĕ йăрласа ответлет. Ак инçе те мăр, апла кусем хам çинех килсе тухĕç-и, тетĕп. Умăра чăтлăх. Чăтлăхран тухсан —сыранлăх. Кусем икĕн-пулмала тесе, йăтăпсене иккĕмĕш хут систересе-тăнлаç. Каллех малăла пăхатăп. Сасартăк умри йăвăçсем хушшинчен хуп-хура мĕлке тухса тăрать. Утсан-утсан упаленне пуçларĕ. Манăн „Гинбер" ун çине сикме хатĕрленчĕ. Ăмăстăп. Сывăха килтĕр, тетĕп. Мĕлке чăтлăхала пăрăнса сухалчĕ. Акă, Иванов умне тухрĕ ĕнтĕ, тетĕп. Çав вăхăтрах:—Стой! Руки в верх! — тесе командă ланă сасă ăнăраса кайрĕ. Мĕлке ман умма сиксе тухаť:— Стой!—ăмăтта ирĕке ăпăратăп. Вăл сăвăрса та антарчĕ. Тăма командă пăратăп. Аллине çĕлелле тăратăрса Иванов шыра пуслаť. Хул айĕнчи пистолет туртса кăларчĕ. Пăхатăп, питĕ ватă старик. „Мĕншĕн капла çŷретĕн", тетĕпĕр.

— Епĕр карчăкпа ене шыратпăр. Енерех сухалăна та,—тет çинçе сассипе. Сийĕнче çĕтĕк пиншак. Чĕркуçи тăван ури хуп-хура пылчăк. Хăй - йĕп - йĕпе. Ана епĕр малала уттăртăмăр. Хыçалтан пăшалпа тĕлесе пыратпăр. Ась килчĕ, ăста пирĕн Крымзов, тетĕп. Çук, курăнмаçť. Вăл теприн хыçĕн, карчăк хыçĕн çуса кайнă пулнă. Заставăна илсе ситернĕ çĕре Крымзов çуса çитрĕ. Ун умĕнче — карчăк.

— Акă ман карчăк!—терĕ те пирĕн умри старик, макăрса йăвĕ.—Йăрĕр пире. Тупасчĕ ĕнене.

Часах заставăна çитремĕр. Пире хирĕç начальник тухрĕ. Тепĕр сехетрен вăл пире „ене шыракансен" маскисене сирпĕ хыççăн вĕсем икĕшĕ те 30—32 сулхи арçынсем, йăтăçĕршăран шуса килнĕ çĕленсем иккенне пĕлтерчĕ. Пĕлтерчĕ те, виççĕмĕре те сывлăх суйса илă пачĕ.

В. Валисăв.

## Пуринчен те хакли

Пирĕн Аслă Сталин çак тĕнчере
Пур хаклисенчен те хаклă

Çăвăппа та епĕр пĕтĕм чĕререн
Ана савса йăрăсем йăрлатпăр.

Вăл нимле тăшмана та парăнмантан
Епĕр ăна хурçă чĕрелĕ тетпĕр.

Пур ĕçхалăхĕшĕн те чи малта пынăран
Епĕр ăна Аслă Çулпуçĕ тетпĕр.

Пире пурне те çутта кăларнăран
Епĕр ăна кĕвелĕмĕр тетпĕр.

Пурин çине те ăшă сăмах çитернĕрен
Епĕр ăна ĕмĕр сŷнми çут çăлтăр тетпĕр.

Пирĕншĕн çав тĕрлĕ хаклăн калаçнăран
Епĕр ăна ылттăн чĕлхе тетпĕр.

Пире пурне те йăратса пĕр пек ŷстерĕнĕрен
Епĕр ăна Тăван Атăе тетпĕр.

Пире ылттăн Конституци туса панăран
Епĕр ăна ырлăх уçси тетпĕр.

Мĕн пур чăваш халăхĕсем пĕр шухăшпа
Ĕмĕр сŷнми хĕрŷ салам йăратпăр.

Кунçулсене ырлăхпа иртерсе
Вăрăм ĕмĕрле пулма сунатпăр.

Кашкăр Микули

## ВЫРМАРА

Сутă шуçăм килчĕ,
Тухрăмăр хире.
Ашшăн кĕтсе ирчĕ
Лăпкă ир пире.

Сывлăш уçă, ирĕк,
Тăри тăрлатаť.
Колхоз уйĕ-хирĕ
Шутсăр сарлака.

Тăста, путенийĕ
Авăтаť лере,
Чĕкеççем ир çийĕн
Йăранаç çеç ине.

Сап-сарă ырашĕ,
Сап-сарă тулли...
Васкатпăр вырасшăн,
Савнăç—хир тулли.

Ĕç вĕрет... Уй-хирĕм
Йŷрлаť те ташлаť.
Жнейкăсем ав вирлĕн
Васкаç йăлташла.

Хĕрлĕ, шур тутăрлă
Хитре çар хĕрсем
Йăшеммĕпе уларлăн
Амăртаç хĕрсе.

Савăк йăрă-кулă
Пит тусла ĕçпе.
Ĕçлĕх йăратуллăн
Йăхаť хирĕпе.

... Кĕç çĕкленчĕ кĕвĕ,
Йăхрĕ инçете.
Куçсем çăлтăр йĕвĕр
Чупрĕç ун çине.

Ку—комбайн; трактăр
Васкатаť ăна.
Пурте ăмăртатпăр,
Ĕç хавас ăнаť.
В. Синицын, Вознесенск йăлĕ, Вăрмар р.

## ТАКМАКСЕМ

Сарă чечек сарăлчĕ
Хевел хĕртсе пахнăран.
Манăн чунăм савăнчĕ
Çенĕ çăвăн тухнăран.

Сатра улма пиççессĕн
Пĕлеп савни çиéссе,
Çĕр тенкелĕх çаймне
Пĕлĕп савни илессе.

Палан тŷпеленетçке,
Çемĕрт çеçкелентçке.
Çенĕ çăвăн çырăнсан
Çĕршыв тĕрекленетçке.

Ирпе сата йăнратаť
Шăпчăк уçă йăрăпа,
Халăх зайом çырăнаť
Ырă, ăшă кăмăлпа.

Ал. Разумăв пухнă.

## Чечеклĕ тĕнче

Йĕшĕрет, çитĕнет сар хĕвел ăшшипе
Пĕртен-пĕр илемлĕ, чечеклĕ тĕнчем.
Сан çинчен йăрлатăп ăшă чĕре тапипне,
Сăнпала мухтанма чĕлехленчĕ чĕлхем.
Сан çинчен мухтаса сăвăсем шăратап,
Çĕршывра пурăнма ытла ырă.
Тĕнчери чи асламăсем йăратса,
Епĕр халь кĕвĕлетпĕр çĕн йăрă.
Ман тĕнчем çитĕнет пыл шăршилĕ сатра,
Çĕр чăмрĕ çинче ылттăн тумлăн.
Аслă Сталин ăна ŷстерет ăшатса,
Çăвăпна çак çĕршыв пыл пек тутлă.
Аслă Сталин пире çырса пачĕ саккун,
Аслă Сталин атте телей пачĕ.
Ырлăхра, тутлăхра çĕршыв çынĕ çак кун,
Çеçкере ман çĕршыв—симĕс сачĕ.

М. Ланташ.
Улаксар, Шăхасан р-нĕ.

## ХАКЛĂ СĂМАХ

Акă тăратăп епĕ инçе чикĕре,
Савнă тус сăмахĕ манăн чĕрере.

Нихăçан та манмастăп унăн сăмахне,
Ана вăл калаçрĕ ăсатнă чухне:

„Савнă чунăм, Ваньă, есĕ як кайăн
Чикке сыхламашкăн тĕрлĕ тăшмантан.

Тен килсе тухайĕç йăвăр вăхăтсем,
Анчах ес пул çирĕп, пул вичкĕн етем".

Ĕп манмастăп туçăн хаклă сăмахне,
Йăратса сыхлатăп çĕршыв чиккине.

Ал. Кăвик.

## Çу кĕввисем

Çĕршыв йем-йĕшĕл тум пĕркеннĕ.
Сăран çинче темчул чечек.
Пануламĕсем пиççĕç ĕнтĕ
Катра та йĕшĕл сатсенче.

Сатри тенкел сине ларсассăн,
Сат илемне курма тухсан,
Илтетĕп еп: тем-тĕрлĕ сасă
Кайăт шăнкăран пек йăнраса.

Сăнатăн еп: тем-тĕрлĕ кайăк
Сунат çапса йăрра тăсаť.
Йем-йешĕл курăкла сăрт айăн
Çăлсем йăвăççĕ палкаса.

Уран сип-симĕс те илемлĕ,
Ав, хур çŷрет чĕпписемпе.
Хĕвел сăватăкĕ хĕмлĕн-хĕмлĕн,
Йĕплет çап-çут йĕпписемпе.

Уйăхир—сап-сар чаршавлă улăх,
Унта хăвасла ĕç вĕрет.
Ес-ше пĕрл-х, ав, вăйă кулă,
Фонтан пек, вăйлăн пĕрхенет.

Йăшсем çырла татма кайăççĕ
Кăнтăр кану вăхăтĕнче,
Ура тапсах йăрра тăсаççĕ
Колхозăн илттăн хирĕнче.

Вл. Пермек.

## Тухрăм Атăл хĕррине

Тухрăм епĕ Атăл хĕррине
Итлемешкĕн çĕршыв йăррине.
Шăратăççĕ çепĕç йăрăсем
Кимĕ çинчи çамрăк хĕрсесем.
Йăрăнăççĕ Атăл çийĕнче
Савăнăç тивлечĕ тулличчен.
Гитара вăй-вылăт, йăнăрат.
Сар хĕрсем кимĕне йăранаç.
Сапăласçĕ хĕрсем инçене
Мăн çĕршывăн ирĕк кĕввинне.
Çекленетĕ çуламăл чĕрем,
Сталин пăнă ĕмĕршĕн хĕрет.
Тухрăм епĕ Атăл хĕррине
Итлемешкĕн хĕрсен йăррине.

Çемен Йĕлĕм.

## „Шурă роза" калав пирки

(Вуланан çырăвĕ)

...Анланчĕ вăл, Ленăна халĕ те йăратнине, анланчĕ вăл, пиччĕшĕн йăратуне нимĕне те улăштарма çуккине, унтан та ытларах анланчĕ вăл, тăван çĕршыва йăратни ку сисĕмлĕхсенчен те вăйлăрахчĕ".

Çак сăмахсем Тукташ çырнă „Шурă роза" калавăн тĕп шухăшне кăтартса параççĕ. Анчах произведении содержанине пăхса тухмасăр унăн тĕп шухăшне ăнланма çук.

Калавăн содержанийĕ çапла: Ахматăулин Ахмет (тракторист) Ленă ăтлă хĕр-врача йăратаť. Ленă хăйĕн шухăшне малтанах татăклăн уçса памасť. Ахмет кŷреннине сиссен, Ленă ана хăйĕн шухăшне пĕтĕмпех каласа парать. çапла вара икĕ çамрăк хушшинче йăрату тĕвĕленсе çирĕпленет.

Ахмет пиччĕшне Инçетри Хелвелтуăç чиккине хурăллана вăхăтра Япони-Манчжури бандисем вĕлерессĕ. Тăван çĕршыва чĕререн йăратакан Ахмет пиччĕш выränне хăй ирĕккĕн чиккине хурăлама кайаť. Чикĕ урлă каçма хăтланаканни Япони самурайĕсем Ахмета суранласçĕ. Суранланнă герой Хабаровскинчи çар госпитальне лекеť. Правительствă ăна совет чиккисене сыхлас ĕçре геройлăх кăтартнăшăн Ленин орденĕпе парнелет. Кунта Чăваш республикинчен вăтăр комсомолка шутĕнче Лена та килет. Икĕ çамрăк хушшинче калама çук телейлĕ тĕлпулу пулса иртет. Калав çакăнпа пĕтет.

Кам вăл Ахмет? Ахмет, чи малтан, Совет Сойузĕн гражданинĕ. Гражданин сăмаха кунта уйрăмăнах палăртса хăвармала. Ахмет массăран уйăрăлса тăракан герой мар. Мĕнре уйăрăлса тăраť Ахмет массăран, ытти çамрăксенчен? Вăл трактăрист, вăл хĕре йăратаť, вăл хăй ирĕккĕн çĕршыв чиккине сыхлама кайаť... Пур-и кунта вулакана тĕлĕнтерекен фактсем, ĕçсем? Пирĕн шутна, çук. Ахмет тăвакан ĕçсене Совет Сойузĕнче пурнакан кашни гражданинах тума пултараť. Анпа пулсан, ун пекçынна кашни хуларах, кашни колхозпа совхозрах тупма пулаť, Апла пулсан, тăван çĕршыва сыхлăхĕшĕн пуçне хунă Валентин Котельниковпа Василий Бараньа йăлташсем те хăй йĕвĕрлĕ Ахметсем пулса тăрăççĕ. Халь епĕр калана шухăш чăн пулсан, ку образа—тип, совет çамрăкĕсен типĕ тесен тĕрĕс пулаť.

Çак образ, каланисемпе пĕрлех, автăрăн творчествăлă ŷсĕмне питĕ аван кăтартаť. „Вăкăр çырминчи" пек, ку калавра та схематизм пурри сисĕнет. Анчах Ахмета илесссĕн, епĕр кунта писатĕлĕн персонажсене тулашĕнче ĕçкере пама çеç мар, вĕсен сисĕм-туйăмĕсене кăтартас тĕлĕшпе те ăсталăх ŷссе пынине куратпăр. Ахмет хуралта тăнă вăхăтра шухăшланисене илсе пахар: „Курса тăр, пиччем, имĕнле варланăман йăрату та мана пĕр варта ŷснĕ тăван тути калас çуккине", йе тата: „Ех, пиччем, пиччем... тăшманăн ирсĕр алли татрĕ сан пурнăçна... Ех, пиччем, пиччем... ес манăн пĕртен-пĕр тăванăмччĕ... Мĕн тери йăрататтăм ен сана". Çак сăмахсене пĕтĕм чĕререн хумханмасăр вулама çук. Вĕсене произведении ун вăйлă емоцилĕ вырăнсенчен пĕри тесе шутламала. Вулакана вĕсем тăшмансене татах та хытрах тарăхма вĕрентĕççĕ, вĕсемпе кĕрешме вулакан чĕринче вăйхăват чĕртĕççĕ.

Пĕр-ик сăмах Ленă çиччен. Лена вĕренĕç хĕр. Вăл Совет, çĕршывăн патриотки. Анчах, пирĕн шутна, Ленă çемçешкерех çын пулса тухнă.

Çак ĕнчен-илсе пăхсан вара Лена пайанки танăхăшăн тип мар. Çăвăпна калаттăр ĕнтĕ: ку образ автăрăн ăнăçлă тухман, ун çинче ытларах лармала пулнă, ытларах ĕçлемелле пулнă.

Илĕр А. Толстойăн „Хлеб" повеçĕнчи Агрипина Чебрĕк образĕне. Агрипинă пуçăсем шăхăрнă çĕрте Иван Гора ăтлă путилăвĕща паллащаť. Вăл Ивана Ленă Ахмета йăратниччен те ытларах килĕштерет пулĕ. Анчах Агрипинă хăйĕн хакне пĕлет. Большевиксен партийĕ йĕртсе пынине вăл винтовкă тытса тăшмансемпе çапăçаť. Хĕрле çар ретĕнче хăйĕн хутпĕлменлехне петерет. Произведени пуçламăшĕнче хăйăсăр, хутпĕлмен хĕр йулашкинчен çирĕп бойец пулса тăраť. А. М. Горькийăн кун пек сыйсем çинчен „Герои не нас час, а на всю жизнь" тенĕ. Ленăна епĕр çăвăн пек геройсем шутне, паллах, кŷртме пултарăмăсăр; унăн çирĕплĕх, хăйăлăх çук.

Анчах кирек ĕнпле пулсан-та, калав тăван çĕршыва йăратма вĕрентет, уйрăм çынăн интересĕсем хăпăлăн, общинăстăн интересĕсене пăхăнса тăмалине кăтартаť. Вăрçă хăрушлăхĕ капланса килнĕ тапхăрта ку калав прогрессийăпа ĕтемлĕхĕн туртăмĕсене палăртаť.

А. Васильăв.

Туанк Хурăски йăлĕ, Шупашкар р.

## Утçăсем йурлаççĕ

Сарлака çĕршывăн
Пит пуйăн уй-хирĕ.
Тыри-пули илттăн—
Илĕртет чуна.
Утăл çăр отречĕ,
Калăн:—Шухă çыл вăл,
Иртет, тусан çеç ав
Хыçра йăванаť.
Утçăсем йŷрлаççĕ
Хăйсен савнă тусĕ—
Йăла йăунă тусĕ—
Хер тантăш çинчен.
Утçăсем йурлаççĕ.

Вĕсен халăхи тусĕ—
Сивушлатла ут та,
Сутă хĕç иккен
Утçăсем йŷрлаççĕ,
Йурласа пыраççĕ
Сарлака та авăл
Çĕн çĕршыва çинчен,
Йурласа калаççĕ:
Епир чи хăватлă,
Хаватлă та паттăр,
Вичкĕн утçăсем!

Çĕмĕрт Иванĕ.

Украина.

*Куçма Çергейĕв*

# Совет патриочĕсем

Кăвак пĕлĕт уçлăхĕнче хурçă кайăксем йăрăпса çŷреççĕ. Пĕрре айăлах анăçĕ вĕсем, хăй-хăй лăрас пек çĕр çумĕпе вĕçеççĕ, унтан каллех çулеле хăпараççĕ, куçпа виçĕмми инçете кайса сухалаççĕ. Çак хурçă кайăксене пирĕн тăнăшсем, пирĕн ĕçри харсăр йăлташсем илсе пыраççĕ. Вĕсем ыйăнтăкĕ ăнăçлă. Вĕсем ыйăнтăкĕ „маччинче" те пирĕн çинчен, хăйсен тăван çĕршывĕ çинчен шухăшлаççĕ.

Хумханса йухăнăн мăн шыв тĕпне, тинĕс шывĕ айне полводникĕсем анаççĕ. Шыв ăйĕнче вĕсем çулте пурнăç пуррине те манаççĕ тейĕн, пĕр вăхăтлăха пирĕн пурнăçăн ăйăтăх уйрăлаççĕ тейĕн. Çук, вĕсем шыв ăйĕнче те пирĕн çинчен, хăйсен тăван çĕршывĕ çинчен шухăшлаççĕ.

Чикĕре пĕр куç хупмасăр пограничник тăрать. Аллăки тинкерет винтĕн курсемпе. Усал ăмĕтлĕ тăшмана картлама пограничник йăлăнах хатĕр. Вилемлĕ шăлăх тăрат-и, хĕвелăнăçĕнчен çил улăт-и йĕ чашлатса çăмăр çăвать-и—пограничник пирĕн çинчен, хăйĕн тăван çĕршывĕ çинчен шухăшлаť.

Тăван çĕршыв! Мĕн тери илемлĕ, асăлă, мĕн тери хаклă ес, тăван çĕршыв! Хăвăй йышлă мăнукусем, хĕрçĕсем, сана, куçăрсине сыхланă пек, сыхласа усраççĕ. Сан йăтушăн, сан хăватушăн ĕç паттăрĕсем тĕнчене тĕлĕнтерекен рекордсем тăваççĕ, сăвăн никам тĕкĕнĕшĕн чикĕ-кŷсен сыхлăхĕшĕн пирĕн пограничниксем пĕччен тенине тăшмана хăрĕç паттăрăн сапăçаççĕ. Тăван çĕршыв, пирĕн чĕре, йун сăнăшĕ патриотисăм туйăмĕпе тулнă. Совет патриотисăмĕ пирĕн кулленхи пурăнăçран туха тăраť, тăван çĕршыв пире çĕнтерĕçем тума хавхалантараť.

* * *

...1938 çул. Хĕвеланăç чикки. Икĕ пограничник дозорта тăраççĕ. Таврара шăв, куç умĕнче нимле хуçакăну та çук. Анчах акă дозор пуçлăхĕ Бровкин йăлтăн чикĕ урлă кăсканни сывлăша курах кайрĕ. Пограничниксем çĕрле пĕшкĕнчĕç, вăтăр тăшмана хирĕç шума тытăнчĕç. Ак вĕсем тăшман сывăхнех çитрĕç. Шăв. Чĕнмеççĕ имĕн те—курчĕç пулас. Унччен те пулмарĕ, çумрак пуленетсенчен пенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ. Пограничниксем çил

## Испанири фронтсенче

Итали сарăсем Левант фрончĕн пур районĕсенче те наступлени тăвас шутпа сапăçаççĕ. Барраакс патĕнчен кантăр ĕнеле Теруел—Сагунто çулĕ тăрăхĕнче наступленине Италин 40 пин çынлă çарне тăратнă. Италиăнсĕн наступленине республиканĕсем чараç тăраççĕ. Италин атакăна йăнă танкĕсене республиканĕсен артиллерийĕ пит те тĕл персе, салата йăнă.

Левант фронтĕнче июлĕн 19-мĕшĕнчен 20-мĕшĕнче пулнă сăпăçусенче йут çĕршыври фашиссен калама çук нумай самолăчĕсем пуличĕ. Фашиссен «65 самолăчĕ Теруел—Сагунто чукунçулĕ хĕрринче вырнаçса тараканă чухлай йăлсем çине бомбăсем пăрахнă. пулеметсенчен персе çурĕнĕ Германин вăсшер моторлă 50 самолăчĕ Еспаньăн тăвĕнчен хĕвел тухăç ĕнчи тинĕс хĕрри çывăхĕнчи район çине бомбăсем пăрахнă, вăл район Сагунтона çурçĕр ĕнчен хŭтĕлесе тăрать.

Июлĕн 19-мĕшĕнче фашиссен артиллерийĕ Мадрид çине перс тăнă, хула çине 500 йăхăн снар йăнă пенĕ.

(ТАСС).

## Ромен Роллан Испани халăхĕ патне йăнă çыру

Испани халăхĕ фашисла интервенцине хирĕç пăттăрăн кĕрешме пуçланни икĕ çул тултарнă майпа Ромен Роллан Испани халăхĕ патне послани йăнă, вăл посланире çапла каланă:

«Испани халăхĕн пăттăр кĕрешĕвĕ икĕ çул тултарнă май, епĕ республикăлă Испани патне йăна хам хĕрринчен хисеплесе йуратнине пăхăртакăн самăхсем йăратăп.

Хăшпĕр державăсенчен правительствисем сутнă Испани Ивропăри тата пĕтĕм тĕнчери халăхсемшĕн—йăна пулăшас тăмалпа сунакан, çав пулăшăва нама чăрмантарăнăшăн чунтан тăрăхакан халăхсемшĕн халăл та таса. Халăхсем пит лăйăх пĕлĕçĕç: вăл Испанире хĕн-хур *кăтартакăн çав тăшмансемех весем* çине танăпăна та хатĕр. Сак вăхăт-ри тăвăсем тенĕчĕ фашизмăн десократ хушшинче пуçланнă кĕрешŭ пирки тенĕх ĕнтĕ лĕр сын та йăнăш шухăшламасăр.

Татăклă çĕнтерĕ демократи ĕнече пулассине епĕ пĕтĕмешех шанăтăп, мĕншĕн тесен демократи ĕнче ăс хакăл, тŭрĕлĕх тата организациленсе пыракан халăхсен каламăсем çук пысăк массисем тăраççĕ.

Италине Германи сарăсем нихăçан та, имĕлле майпа та Испани çĕрĕ çинче никĕс хывса вырнаçса ларма пултарнăç çуккине епĕ шанăтăп. Республикăнĕсен вăхăтăкăш парăнас-мĕн пуçсан та, испаньĕсем,—вăл шутрах хăйсем улталаннине пула хăй Франко лагерĕнче тăракан испаньĕсем те,—пĕр çын пек пĕр кăмăлпа пулнине вăл сарсене Испанирен хăваласа йарĕç. Кирек мĕн пулас пуçсан та, фашиссем çак вăйăра вылăса йăрăçсех».

(ТАСС).

## Йапони хуçалăхĕ йăвăрлăтра

Америкăра тухса тăракан «Нью-Йорк Таймс» йăтла пысăк хăçат пĕлтернĕ тăрăх Йапони империалисчĕсем Китайа хирĕç пуçласа йăвăрах хурăхла вăрçă Йапони хуçалăхне, уйрăмăнах Йапони ĕçсыннисен пурнăçне питĕ те нумай йăвăрлăх кĕнĕ.

Вăрçă вăлăн питĕ нумай укçа-тенкĕ тăкаласçĕç, çав тăкакси пĕтĕм йăвăрлăхĕ ĕçсыннисем çине тивĕнеç.

Вăрçă çĕршывĕн ăшшинĕ доходне пĕчĕклетнĕ, çав вăхăтрах укçа-тенкĕ пите нумай кирлĕ. Йапони государствăн кивçинче çак çулхи вăрçăн 1 мĕшĕне 13 мĕлĕарда ийĕн тăран шутланнă. Çулталăк пĕтиех тĕлĕ çак кивçен татах тата 50 процентăн кайă мар ĕçет.

Тавар хакĕсем Йапонире вĕçĕмсĕр ĕçсе пыраççĕ.

Промышленнăç чăмсах пырать. Сăмахран, искусственнăй пурçăн тăвакан промышленнăйăн оборудованиччен 40 процентă йăхăн ĕç лемесĕр тăрать. Тулашри сутулăлу вăйăлă чакать. Йут çĕршывсене пурçăн сутасси 20 процент тăрăн чакнă. Америкă Йапони пурçăнне бойкот тăвать. Йут патшалăхсенчен çĕре-çĕмĕçтерĕлми имçамсем кŭрсе тăрасси вăлăнăн шутран 30 процент пĕчĕклесĕ, мĕншĕн тесен çĕршывра шăтăк заплас пĕтĕмлĕше пĕтнине пĕрех. Çĕре-çĕмĕçтерĕлми имçамсем çителеккерĕн йăлхуçалăхăнне хăрушлăх умне ялсе пырат, мĕншĕн тесен Йапони çĕре-çĕмĕçтерĕлми имçамсем нумай шăпăрлăх тăрăшса кĕртмеççĕ. Укçа-тенкĕ çителеккерĕн пирки Йапони Америкăран тăвараймĕ машинăсем сутăн ялсе класкине пĕтерсе лартма лекет.

Йапони хăй пуçарса йăнă вăрăхурăлла вăрçа малала тăсса пыма кăсăкланăнех выляраллах пырать.

(ТАСС).

## Аслă шкулсемпе вăтам шкулсем вăлăйи учебниксем

Аслă шкул работникĕсен Пĕтĕм Сойузри канашлăвĕнче туха калаçă сăмахра В. М. Молотăв йулташ аслă шкулсем вăлăн ăайăх учебниксем тăвассине ун кирлĕ задача вырăнне лартрĕç.

Аслăлăх ĕçĕнчи малта пыракан работниксем совет правительствин пуçлăхĕ чĕнсе калăнине хĕрлĕн йышăннă. Халăн вăхăтра Мускавра аслăлăх работникĕсен вуншар бригадисем аслă шкулсем вăлăн уч-биксем сыраççĕ.

Аслăлăхсен Академин истори институчĕ халĕ аслă шкул вăлăн те вăтам шкул вăлăн те учебникĕсем (хрестоматисем пĕчĕкрех ситернĕ. Çĕнтăвĕр тата октăвĕр уйăхĕсенче аслă шкулсем вăлăн вăтам ĕмĕртти истори учебникĕн пĕрремĕш икĕ-мĕш пайĕсенчи пĕчĕклесе тухаççĕ. Çак вăхăт тĕлĕнех аслă шкулсем вăлăн Хевеланăри çĕнĕ истори учебникĕн икĕ пайĕ пичетленсе гухмала. Академик Лукин редакцине «Новая история в документах» йăтла виçе томлă хрестоматине пичетĕ пама хатĕрленĕ. Институт çак çул пĕтнĕ çĕре Испани истории учебникне пичете хатĕрлесе пама палăрать.

Çĕнĕ учебниксем сырас тĕллĕпе çаван пекех тата Мускаври государствă университетĕнчи, истори, философи тата литературă институтĕнчи аслăлăх сотрудникĕсен бригадисем те ĕçлеççĕ.

## Стаханăвецсем экскурçине кайаççĕ

Иртнĕ çулта Чăваш чăпта сойузĕ хăйĕн çыçтеминчи нумай стаханăвецене тĕрлĕ вырăнсене экскурçине йăвçĕ. Çаван пекех кăçал та производствăри нумай стахановецсене экскурçисене йăрать.

Кăçал ку тăрăвçи 28 çын экскурçине пулнă та ентĕ. Весем Мускава, Горькине тата Хусана кайса курнă. Шурăкасси промĕртелĕнчи (Ишлей р.) 65 çулхи стахановец Андросов Осипов стахановец есленĕçĕн пăнă путевкăпа Хусăнăн экскурçине кайăç çулла. Производствăри стахановецсене выгнурнăпа пăнă Чăваш чăпта сойузĕ хăйĕн татах та чылай путевкăсем илсе хатĕрленĕ. Сăпла, Ленинграда кайăма 20 путевкă, Днепрогеса çине кайăма 5 путевкă, Хусана кайма 10 путевкă илсе хунă.

Ив. Е.

## Пĕр çемйере 3 отличница

Шăпткас йăлĕнчи (Тутаркас р). Антонăв Степан семйинче шкула кайăкан вăтăрсем виççĕн. Чи аслă кĕрчи—Антонăв Нина Туçаври тулăмăр вăтам шкулăн 7-мĕш классĕнче Людмила пуçламĕш шкулăн 1-мĕш класса отличнă паллаçсемпе вĕренсе пĕтерĕç.

Нина халĕ вăтам шкула кĕме хатĕрленет. Çак телейлĕ ачасен ашшĕпе вĕсене лăйăх туллантарат.

## Çĕнĕ пăртсем

Ĕлĕк Ĕ-фермăсенче (Елĕк р) çĕнĕ çуртсем ларткалаç. Анчах вĕсем хура, пĕчĕк, çине çулăм вăтанĕ пăртсем пулнă. Кăçал Ĕ-фермăсенчи колхозник çĕнĕрен пысăк пăртсем пĕртсем лартнă. Пĕрт тăвакансем тăмпа хутăштарăпа улăм, хĕтимер витнĕ.

Атăл çинче Мохăв фото-ӳкерчĕкĕ.

## Йĕркесĕрлĕхсене камăн пĕтермеле-ши?

Чăваш АССР çыхăну тытăнĕ çулмĕнче июлĕ уйăхĕнче почта уйрăмĕн начăлăнккисене хатĕрлекен 3 уйăхлăх курс ĕçлĕ. Курсра пĕтĕмпе 10 çын вĕренеççĕ. Вĕсем пурте комсомолĕçсем. Çак курсра вĕренекенсем чăн-чăн пелĕ парас тесе никам та тăрăшмасть. Заштисем йĕркелĕ пулмаççĕ. Кунне 7 сехет вĕренмелле вырăнне 2—3 сехет кăна вĕренетнĕрĕ.

Урока пымăн преподавательсем пурте сыхăну çуртĕнче ĕçлекен работниксем. Вĕсем ĕç вăхăтĕнче вĕрентме пырмаççĕ. Вара курсантсен вĕренес вăхăта ирккесрех